Иванов К.В. Икĕ хĕр; Тимĕр тылă : [сăвăсем] / К.В. Иванов // Сироткин М.Я. Илемлĕ литература: VI кл. – Шупашкар, 1939. – С. 23-24.

Асап килсен, хĕн килсен,
Шухăшласа ларатăп:
Çамрăк вăхăт, ыр вăхăт,
Ăçта эсĕ çухалтăн?

Çамрăк кунсем, ыр кунсем
Иртсе кайрĕç тĕлĕк пек.
Асап, хĕн-хур халĕ пур,
Килчĕç хура пĕлĕт пек.

Чăнах та, патша саманинчи миссионерсем хушшинчи „хура пĕлĕт пек" килсе хупланă йывăр пурăнăç Кĕçтенттине канăç паман.

1909—10-мĕш çулхи хĕле килĕнчех иртterет. Ĕçчен этем вăхăта пĕртте сая ямасть. Килĕнче столяр ĕçĕпе хăйĕн хĕсĕк вăхăтне тултарать, икĕ шкап тата ытти япаласем тăвать.

1910-мĕш çулхи çуркунне И. Я. Яковлев Чĕмпĕре килме чĕнсе çыру ярсан, Кĕçтенттин татах унта кайнă.

Вăл каллех кĕнекесем куçарнă, куçарнă кĕнекесене тӳрлетнĕ тата хĕрсен сăнавлă шкулĕнче рисовани урокĕсем панă. Тăвата çул хушшинче Кĕçтенттин хăй тĕллĕн ним те çырман. Унăн, ĕç хушшине путнăскерĕн, литература ĕçне илсе пыма пушă вăхăчĕ пулман.

Тепĕр енчен, пурăнăç хĕсĕннĕçемĕн хĕсĕнсе пынă, вырăс шовинизмĕ хаярланнă. 1905—6-мĕш çулсенче революцие хутшăннă чăвашсене хĕсĕрлеме тытăннă патша правительстви пур чăнлăх шухăшсене çиме тытăннă. Вырăс шовинисчĕсем Чĕмпĕр шкулне те пĕтĕмпех вырăслатма тапăннă т. ыт. те. Кĕçтенттин питĕ йывăр пурăнăçа лекет. Çакă хĕсĕк те киревсĕр пурăнăçра унăн сывлăхĕ пĕтет, унăн вар катарĕ пуçланать.

Вар катарĕ Кĕçтенттине пĕтерсех пынă, вăл пĕтĕм ӳт-тирĕпе типнĕ, çав вăхăтрах тата унăн ӳпке чирĕ—туберкулез пуçланнă. Кĕçтенттин вилĕм умĕнче тăнă.

Вăл 1914-мĕш çулхи кĕркунне Чĕмпĕр хулинчен килне таврăннă. Икĕ чир пĕр этемпе кĕрешнĕ, сываласси çинчен шухăшласси пулман: варĕ те ӳпки те çĕрнĕ. Кĕçтенттин пĕр хĕл хушши вырăн çинче выртнă, хăйне вырăн çумне пăталаса хунă хăрушă чирсемпе кĕрешнĕ. 1915 çулта мартăн 26-мĕшĕнче вилнĕ, 29-мĕшĕнче ăна пытарнă.

*Ухсай Яккăвĕ.*

---

„**Икĕ хĕр**" ятлă юмахăн тĕп шухăшĕ çакнашкал: чее çын ĕçпе мар, сăмахпах юрать,—кам тӳррĕн калать, вăл çынна юраймасть. Аслă хĕрĕ ашшĕн пурлăхне—кăвак лашине, вĕллери пылне, тӳшек-минтерне мухтать те, ашшĕ, ăна юратса, „çур мулне" парать. Кĕçĕн хĕрĕ ашшĕнне нимĕне те мухтамасть те, çавăншăн ашшĕ ăна хăваласа ярать. Кунтан эпир ĕлĕкхи саманара пуянсем хăйсен пуянлăхне мухтакан юмах-халлапсене юратнине куратпăр.

# Икĕ хĕр.

Хăйĕн аслă хĕрĕнчен
Ашшĕ ыйтать: мĕн мăнтăр?
— Пирĕн атте килĕнчи
Кăвак лаша пит мăнтăр,

— Ăслă каларăн, хĕрĕм.
Унтан ыйтать: мĕн тутлă?
— Пирĕн атте килĕнчи
Вĕллери пыл пит тутлă.

— Ăслă каларăн, хĕрĕм.
Татах ыйтать: мĕн çемçе?
— Пирĕн атте килĕнчи
Тŭшек-минтер пит çемçе.
— Ăслă каларăн, хĕрĕм.
Хисеп турăн аçуна,
Ентĕ сана çакăншăн
Çур мулăма паратăп.
Унтан кĕçĕн хĕрĕнчен
Ашшĕ ыйтать: мĕн мăнтăр?
— Çут тĕнчере çĕр мăнтăр,
Унтан мăнтăр нимĕн те çук.
— Санра пархатар сахал.
Унтан ыйтать: мĕн тутлă?
— Ыйхă тутлă тĕнчере,
Унтан тутли нимĕн те çук.
— Санра пархатар сахал.
Татах ыйтать: мĕн çемçе?
— Алă çемçе тĕнчере,
Унтан çемçи нимĕн те çук.
— Санра пархатар сахал,
Эсĕ манăн хĕрĕм мар!
Ашшĕ вара ку хĕрне
Хăваласа ячĕ, тет.

## Тимĕр тылă.

Тимĕр тылă тесенех,
Сехри хăпать инкесен.
Мĕншĕн-ши вăл? Пĕлĕр-ха!
Акă мĕншĕн, калам-ха!
Пирĕн чăваш арăмĕ
Тимĕр тылла юратмасть,
Пулсан пултăр йĕс тылă,
Йывăççи те начар мар.
Тимĕр тылă ăшĕнче
Шурă шуйттан ларать, тет.
Тимĕр тылла тытсанах,
Шăлĕсемпе шаккать, тет.
Кантăр тыллас тесенех,
Çŭпне куçа кĕртет, тет.
Çав çŭп куçра юлсассăн,
Çын тухатмăш пулать, тет.
Çав тухатмăш хушнипе
Тимĕр тылă çĕрĕпе
Урам тăрăх, хир тăрăх
Шăлтăртатса çŭрет, тет.
Тылă сиксе пынă чух
Çулĕ çинче çын пулсан,
Ăна хĕссе вĕлерсе,
Юнне ĕçсе каять, тет.
Ентĕ пĕлсе çитрĕр-и,
Мĕншĕн пирĕн инкесен,
Тимĕр тылă тесенех,
Сехри хăпса тухнине?
Кам та пулин шанмасран,
Е вăрçасран хăраса,
Пĕр ĕç çинчен калам-ха—
Хамăр ялта пулнине.

---

Пирĕн ялта пĕр карчăк
Пурăнатчĕ ĕлĕкрех.
(Халь ĕнтĕ вăл тупăкрах
Выртать масар хыçĕнче).
Пурăнăçа çав карчăк
Çĕмĕрттеретчĕ анчах:
Пурччĕ унăн качака,
Икĕ сурăх, пĕр кушак,
Чалăш пŭрчĕ тăрринче
Тăманасем усратчĕ,
Тăманасем патĕнчех
Тимĕр тылли ларатчĕ:
Пит хăрушă япала—
Пĕр кăтăрса кайсассăн.
Ентĕ хăвăр та пĕлĕр
Карчăк суккăр пулнине,
Мĕншĕн тесен карчăкăн
Тимĕр тылли пур-ĕçке.
Кантăр шăмми çŭппине
Куçа кĕртет шур шуйттан.
Суккăр пулсан, инçех мар
Тухатмăша тухма та.
Ку карчăк та—ăçти çук
Тухатмăшчĕ таврара.
Ăна пĕлмен çын та çук,
Палламан йытă та çук.

---

Пурччĕ тата карчăкăн
Икĕ тăлăх кинĕсем:
Икĕ кин те лайăх кин,
Иккĕшĕ те сарă кин.
Аслă кинĕ мĕн ятли
Халĕ пире кирлех мар:
Хăйне кĕвĕллĕ арăмччĕ,
Тŭрриперех каласан,
Хитрех те мар мухтама,
Начар та мар хурлама.

Кĕçĕн кинĕн, каласан,
Ячĕ унăн Чĕкеçчĕ,
Хăй те чĕкеç пекехчĕ,
Ытарма çук аванччĕ.
Алли çăмăл ĕç тума,
Тути çӳхе чуптума.
Чĕкеç кинне карчăкĕ
Темшĕн ытла юратмасть.
Хăвăр тупăр мĕншĕнне,
Ăна чĕлхем калаймасть.
Куçĕ-пуçĕ пит йăваш,
Çын савăнса тăмалла,—
Çапах карчăк юратмасть,
Ухмах тесех шухăшлăн.

---

Çакă кинĕ яланах
Минкĕретет карчăка:
— Апай, яр-ха хăнана,
Апай, яр-ха хăнана!
—Пуç çавăрмăш, çĕр çăтман,
Çитĕ çынна йӳтетме!
Авантарах ĕçне ту,
Вăхăт çитсен, ярăп-ха.
Чĕкеç кинĕ ахаль те
Ĕçне тăвать çунтарса,
Карчăк çапах Чĕкеçне
Вăрçать ĕçне туманшăн.
Суккăр карчăк-кăрчăкăн
Куç курманни ахаль мар.
Вăхăт çитсен, хăй вилсен,
Ярĕ-ха вăл хăнана.
Виçĕ кунччен Чĕкеç кин
Ват карчăка йӳтетрĕ:
— Апай, яр-ха хăнана,
Аппам патне каям-ха.
— Ай, çĕр çăтманнă пуçна!
Ырра мар-тăр ку кинĕм!—
Виççĕмĕш кун, каç пулсан,
Карчăк ытлах çилленчĕ.
— Апай, яр-ха хăнана!
Апай, яр-ха хăнана!
—Каях, каях, йӳтетмĕш!
Курăн-ĕçке ху кунна.
Кĕçĕрех кай, кĕçĕрех,
Пуçу кунта ан пултăр!—
Кин васкаса çавăнтах
Сĕтпе юрчĕ виç юсман.
Хăвăр пĕлетĕр: юсман,
Ырăсене асăнса,
Вĕрсе-сурса пĕçерсен,
Пит хăватлă япала.
Пирĕн ялта яланах,
Инçе çула кайнă чух,
Усал-тĕсел тивесрен
Юсман чиксе каяççĕ.
Çапла пирĕн инке те
Хăй лашине кӳлчĕ те
Тухса кайрĕ сĕм-çĕрле
Акăр ялне хăнана.

---

Тимĕр тылă шалтлатать,
Усал карчăк сӳс тыллать.
Йĕс тăпсаллă хапхана
Уçать чĕлхе калаcа:
— Шалт-шалт тыллăм, шалт
тыллăм!
Акăр çулпе сик, тыллăм,
Çав кин патне çит, тыллăм!—
Тимĕр тылă, шалт тылă,
Сиксе кайрĕ çулпала.
Тылла сиссе, сарă кин
Юрă юрлать, чуптарать:
— Уйăх çути çап-çутă,
Акăр çулĕ тап-такăр.
Чуп-чуп, лашам, чуп, лашам,
Çитес çĕре çит, лашам.
Хăрат, хăрат тăшмана,
Сĕтпе юрнă юсманăм!—
Пăрахать те хăварать
Пĕр юсманне çул çине.
Çитнĕ-çитнĕ çĕртенех,
Юсман тĕлне çитсенех,
Тимĕр тылă, хăраса,
Сиксе кайрĕ килнелле.
— Шалт-шалт тыллăм, шалт
тыллăм!
Акăр çулпе сик, тыллăм,
Çав кин патне çит, тыллăм,
Çав кин пуçне çи, тыллăм!—
Тимĕр тылă, шалт тылă,
Сиксе пырать çулпала.
Тылла сиссе, сарă кин
Татах юрлать юррине:
— Уйăх çути çап-çутă,
Акăр çулĕ тап-такăр.
Чуп-чуп, лашам, чуп, лашам,
Çитес çĕре çит, лашам,
Хăрат, хăрат тăшмана,
Сĕтпе юрнă юсманăм!—
Пăрахать те хăварать

Тепĕр юсман çул çине.
Çитнĕ-çитнĕ çĕртенех,
Юсман тĕлне çитсенех,
Тимĕр тылă, хăраса,
Сиксе кайрĕ каялла.
— Шалт-шалт тыллăм, шалт
тыллăм!
Акăр çулпе сик, тыллăм,
Çав кин патне çит, тыллăм,
Çав кин пуçне çи, тыллăм!—
Тимĕр тылă, шалт тылă,
Сиксе килет çулпала.
Тылла сиссе, сарă кин
Йĕрсе юрлать юррине:
— Акăр çулĕ тап-такăр,
Уйăх çути çап-çутă.
Чуп-чуп, лашам, чуп, лашам,
Çитес çĕре çит, лашам.
Хăрат, хăрат тăшмана,
Сĕтпе юрнă юсманăм!—
Пăрахать те хăварать
Хăйĕн юлашки юсманне.
Çитнĕ-çитнĕ çĕртенех,
Юсман тĕлне çитсенех,
Тимĕр тылă каялла
Сиксе кайрĕ ялалла...

---

Çитес çĕре çитрĕ кин,
Шаккать аппăшĕн хапхине:
— Аппам, кĕрт-ха йăмăкна,
Кĕрт-ха Чĕкеç йăмăкна,
Усал тăшман хăвалать.
— Çĕрле çӳрес хăнам çук,
Утах хăван çулупа!
— Сыв пул эппин, аппамçăм.—
Чĕкеç кайрĕ, шаккарĕ
Тепĕр аппăшĕн хапхине:
— Аппам, кĕрт-ха йăмăкна,
Усал тăшман хăвалать.
— Çĕрле çӳрес хăнам çук,
Каях хăвăн çулупа!
— Сыв пул эппин, аппамçăм.—
Чĕкеç кайрĕ, шаккарĕ
Хăйĕн пиччĕшĕн хапхине:
— Пиччем, кĕрт-ха йăмăкна,
Усал тăшман хăвалать.
— Çĕрле çӳрес хăнам çук,
Уттар хăвăн çулупа!
—Сыв пул эппин, пиччемçĕм.
Йĕре-йĕре сарă кин
Аслăк çине улăхрĕ,
Йĕре-йĕре çавăнта
Улăм ăшне пытанчĕ.

---

— Шалт-шалт тыллăм, шалт
тыллăм!
Акăр çулпе сик, тыллăм,
Çав кин патне çит, тыллăм,
Çав кин пуçне çи, тыллăм!—
Тимĕр тылă, шалт тылă,
Сиксе пырать çулпала.
Шалт-шалт сикет, шалт тăвать,
Сарă кин чунне витерет...

---

Карчăк хапхи умĕнче
Кĕтет, кĕтет тыллине.
Çук, кăтăртнă пулмалла:
Тылли халь те таврăнмасть.
Таçта-таçта аякра
Шалт-шалт туни илтĕнет.
Аптăраса тухатмăш
Тылла чĕнме тытăнать:
— Шалт-шалт тыллăм, шалт
тыллăм!
Ман патмалла сик, тыллăм,
Ман патăма кил, тыллăм,
Мачча çине вырт, тыллăм!—
Таçта-таçта аякра
Аçтаха пек шăхăрать,
Ахăр тылă кăтăртнă:
Темĕскерпе çапăçать.
— Шалт-шалт тыллăм, шалт
тыллăм!
Ман патмалла сик, тыллăм,
Ман патăма кил, тыллăм,
Мачча çине вырт, тыллăм!—
Таçта-таçта аякра
Шăтăр-шатăр илтĕнет,
Ахăр тылă кăтăртнă:
Темĕн унта çĕмĕрет.
— Шалт-шалт тыллăм, шалт
тыллăм!
Ман патмалла сик, тыллăм,
Ман патăма кил, тыллăм,
Мачча çине вырт, тыллăм!—
Таçта-таçта аякра
Шăтăл-шатăл илтĕнет,
Ахăр тылă кăтăртнă:
Çĕр çĕмĕрсе таврăнать...
Шалт-шалт турĕ, шалт турĕ,

Карчăк пуçĕ ялт турĕ.
Çуккăраскер çул çинчен
Ĕлкĕреймерĕ пăрăнса.
Тылă пычĕ, шалтлатрĕ—
Карчăк пуçне татайрĕ.
Тухатмăшăн пырĕнчен
Юхрĕ тухрĕ хура юн.

Иртрĕ кайрĕ тĕттĕм çĕр,
Хуллен-хуллен сирĕлчĕ.
Сикрĕ тухрĕ çутă кун,
Çут çанталăк çуталчĕ.
Акăр ялĕ вăраннă.
Йывăр ыйхă татăлнă.
Пурте тăвать хăй ĕçне
Ĕçчен чăваш йĕркипе.
Чĕкеç инкен піччĕшĕ
Авă выльăх апатлать—
Хăй йăмăкĕн виллине
Тупать улăм ăшĕнче.
Авă пырать пĕр этем—
Арман хуçи—урампа.
Шур сухалĕ икĕ хăлаç,
Курпунĕ те икĕ пăт.
Туйи çине таяннă,
Хăй кăвакал пек утать,
Пысăк лавка умĕнче
Хăшăлтатса чарăнать.
Хăй çăнăхлă тумтирне
Çапкаласа мăрлатать:
—Хурлăх, хурлăх, Михал тус!
Ман арманăм çук ĕнтĕ!
Кĕçĕр усал-тĕселсем
Шыв урапи хушшине
Çакланнă та, тытăнчĕç
Урапана çилĕпе
Çухăрттарса çавăрса,
Арман чулне шăхăртма.
Эпĕ чупса тухиччен
Арманăма усалсем
Лăштăр-лаштăр ишнĕ те
Тара панă таçталла.—
Пирĕн ялта чăвашсем
Тухнă тăнă урама,
Ушкăнĕпе кĕрлеççĕ
Вилнĕ карчăк тĕлĕнче.
Карчăк выртать, хускалмасть,
Таврашĕнче хура юн.
Пĕвĕ выртать пĕр çĕрте,
Пуçĕ выртать пĕр енче.
Тылă ларать, шалтлатмасть,
Мачча çинче сасă çук...
Халăх шăв-шавĕ пĕр вĕçлĕ,
Шăв-шав сăмахĕ çĕр тĕслĕ.

## „Тимĕр тылă“ çинчен.

„Т и м ĕ р-т ы л ă“ юмахра çакăн пек тĕшмĕшлĕ ĕç çинчен каласа панă. Пĕр тухатмăш карчăкăн икĕ тăлăх кин пулнă. Çамрăк кинĕ хуньамăшĕнчен аппăшĕ патне хăнана ыйтса тухса кайсассăн, лешĕ тарăхнипе тимĕр тылла хăйĕн кинне хăваласа çитсе вĕлерме хушать. Çамрăк кин аппăш ялне çитет, анчах лешсем ăна уçса кĕртмеççĕ те, тимĕр тылă, хăваласа çитсе, кинне вĕлерет. Юмахран акă мĕн курăнать: ĕлĕкхи хĕрарăм, пĕр качча кайсассăн, çĕнĕ асапа кĕрсе ӳкнĕ. Килти аслисем ăна ниçта тухма ирĕк паман, çынсем патне мар, тăванĕ патне те унăн çӳреме ирĕк пулман.

„Тимĕр тылă“ юмахра Чĕкеç, карчăк, тимĕр тылă сăнлăхсем уйрăмăнах палăрса тăраççĕ. Халăх юмахĕнчи пекех автор вĕсене типлăн кăтартать. Çамрăк кин—йăваш, çемçе кăмăллă, карчăк—хаяр, усал çилĕллĕ; тимĕр тылă, шăп халăх юмахĕнчи пекех, этем евĕрлĕ, ĕçсем тума пултарать. Вăл тухатмăш карчăк хушнипе çамрăк кине хăвалать, каялла таврăнать, çынсене вĕлерет т. ыт. те. „Çапа пĕлмен пушă хăйне тивнĕ“ тенĕ пек, юлашкинчен хăйĕн хуçине—тухатмăш карчăка та вĕлерет.

Литературăра çавнашкал чунсăр япалана чĕрчун евĕрлĕ кăтартнине м е т а ф о р а (олицетворени) теççĕ.